Пирĕн ентеш

«Кашни çемьен хăйĕн çĕпри...»

Çĕпре тенĕрен... Вăл калама çук лайăх япала! Çăкăр пĕçернĕ чух та, эрех-сăра тунă чух та унпа туллин усă куратпăр. Ара, кирлĕ таран йӳçсе çитсен çеç кулачă кăпăшка та тутлă, сăри кăпăклă та техĕмлĕ, эрехĕ хаяр та ураран ӳкерекен пулаççĕ. Çĕприне те ăна виçеллĕ усă курма пĕлмелле-çке! Чĕптĕмĕн-чĕптĕмĕн ямалла. Унсăрăн... Тепĕр тесен, пурнăç вăл хăй те чăн-чăн çĕпре-çке! Йӳçет те йӳçет! Пурнăçа йӳçтерсе пылаклантаракан туйăмсем – юрату, ырату, телей, савăнăç, туслăх – çинчен чуна уçса калаçма Нина Борисовна Изедеркина сăвăç, артистка килĕшрĕ. Н.Б. Ильина (Изедеркина унăн хушма ячĕ) Чăваш Республикин писательсен союзĕн членĕ, А.Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ, «Ӳкнĕ хыççăн çӳлерех вĕçетĕп» кĕнеке, халăхра анлă сарăлнă «Пур-и юрату?», «Юрату ташши», «Сивĕ мана, ăшăт», «Эпир иккĕн» тата ытти нумай юрă авторĕ.

– Нина Борисовна, килĕшетĕр пуль, çемьесенчен чылайăшĕ чи малтан юрату çинче никĕсленет, кайран çак хĕрӳ те çепĕç туйăм лăплансан туслăхпа алла-аллăн утма пуçлать, унăн хĕмленсе çунакан вучахĕ сӳнсен вара арканать. Эсир çырнă пĕр сăвăра çакăн пек йĕркесем пур «Калăр мана калăр: пур-и юрату? Пур пулсассăн калăр: мĕн вăл ырату?» Тен, хуравне пĕрле шырăпăр?

– Хирĕç мар. Этемĕн кашни тапхăрĕнче юратун хăйĕн пĕлтерĕшĕ. Ача чух атте-анне-не саватпăр, ӳснĕçемĕн çут çанталăка сăнама вĕренетпĕр, çуркунне çитсен вара тин çурăлнă чечексене юрататпăр, шкул сакки çине ларсан пирĕншĕн «5» паллă чи пĕлтерĕшли, хĕрпе каччă çулĕнче вара чĕре ачаш туйăм тыткăнне лекет... Ман шутпа юрату – пысăк япала мар. Тĕлĕнсе ан тинкер. Ăнлантаратăп. Чечек те, «5» паллă та – пĕчĕк пулăм. Эсĕ те, эпĕ те, атте-анне те – çак пысăк тĕнчери пĕчĕк пăнчăсем, кашни пиртен – пĕр тумлам, пĕр сывлăм пĕрчи, пĕр шăрçа. Эпир кашни конкретлă çынна суйласа илсе юрататпăр. Ӳснĕçем туйăмсем та пысăкланса пыраççĕ. Малтан савнине, кайран мăшăра, унтан ачамăрсене юрататпăр. Пĕчĕк пăнчăсем нумайлансах пыраççĕ. Юрату вăл – этем кун-çулĕнчи тĕрлĕ тĕслĕ туйăмсен пуххи, тĕрĕçрех хуравласан, пурнăç уйĕнче пухнă шăпа çыххи. Çемье – арифметикăн пĕр кăткăс задачи. Пĕрпĕринпе килĕштерсе те ăнланса пурăнас тесен кăларма, хушма, пайлама, хутлама пĕлмелле. Çемье пурнăç ăшне, çатма çине çăмарта кĕрсе выртнă пек, кĕрсе выртмасть. Çемье çавăрнă хыççăн пĕчĕк ача пек çĕнĕрен утма вĕренмелле. Малтанхи пурнăç пĕтет, çĕнни пуçланать.

Ырату та ачаранах пуçланать. Такăнса ӳкен – ырату, выляна чух пĕр-пĕрне тĕкен, çапан – ырату, анне-атте вăрçать – ырату, савни пăрахать – ырату. Унăн чăтăмĕ те çулланнăçем ӳссе пырать. Ырату мĕнне пĕлсе ӳсмен çынна аслăлансан питĕ йывăр килет. Юратăва та, ыратăва та чăтмалла – иккĕшĕ те куççуль кăлараççĕ: пĕри – савăнăç, тепри – хурлăх.

– Нина Борисовна, эсир виçĕ ывăл амăшĕ, тăватă мăнук асламăшĕ, сирĕн çумра ăнланакан тата вăй çитнĕ таран пулăшакан мăшăр. Çак кунсенче кун-çулăрти утмăлмĕш çул утăмне тăватăр. Çемье телейĕ мĕн иккенне çисекен, пĕлекен, туякан хĕрарăм пек курăнатăр мана. Телей çăрин уççине вулакана тыттарсамăр.

– Телейăн чăн тупсăмне пĕлместĕп çав эпĕ. Хурав тупаймастăп. Юратупа ырату мĕнне туятăп-ха. Юрату вăл пăлт-пăлт тăвать. Мăшăрăм куçне тинкеретĕп те унта тӳпери çиçĕме курнă пекех çутă куратăп. Вăл хăй мана юратнине ĕçпе ĕнентерет. Эпĕ йывăç çинчен ӳкнĕ хыççăн вилсе чĕрĕлсен вăл мана çĕнĕрен ура çине тăма пулăшрĕ.

– Çакă мар-ши вăл телей?

– Геннадийпе эпĕ вырăс драма театрĕнче паллашрăм. Вăл çутă йĕркелекен художникчĕ, эпĕ – гример-пастижер. Вăл Çĕрпӳ районĕнчи Янсакассинче кун çути курнă, эпĕ – Муркаш районĕнчи Исетерккĕре. Геннадий ун чух ман пата пĕр юлташĕ валли авиабензин ыйтма пычĕ. Пирĕн пӳлĕмре флягăпах тăратчĕ те, пĕчĕк савăтпа тултарса парса ятăм.

– Юрату хыпса илме сире шăрпăк çеç кирлĕ пулнăçке!..

– Шăрпăкĕ унăн тупăнчĕ, эпĕ вара – коробки (ахăлтатса кулать).

– Шӳтлемесен...

– Пирĕн юрату калаçуран пуçланчĕ. Иксĕмĕр те пурнăç çинчен каласа кăмăллаттăмăр. Тăнлă пуплет, ку арçынпа пурнăç тума пулать тесе шутларăм. Пулас мăшăра ыттисемпе танлаштарса суйларăм. Пурнăç пĕрчи вĕт вăл манăн. Ятарласа суйлама вара тырă пĕрчи мар (кулать). Чылай вăхăт ăна айккинчен сăнарăм. Хăйне тусĕсемпе, тăванĕсемпе, хĕрсемпе еплерех тытнине пăхрăм. Лексиконра усал сăмахсем çук, ваттисемпе хăйне тирпейлĕ тытать, хĕрсене кӳрентермест. Пулас мăшăра сăмса çывăхĕнчен мар, аякран курмалла. Çывăхран – пĕчĕк, аякран пысăк курăнать. Çулсем иртсен тăрăшулăхĕшĕн «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçрĕ мăшăрăм.

– Атте-аннене мăшăрпа паллаштарнă чух ятарласа хатĕрлентĕр-и?

– Аннен эпир пиччепе иккĕн пулнă. Виталий пиччен ашшĕ Финн вăрçинче хыпарсăр çухалсан, анне мана тупнă. Анне колхозра вăй хунă, атте ялта выльăх-чĕрлĕх пуснă, çăмартасем каснă (кулать). Ялти хăш-пĕр çынсем тĕл пулсан мана анне сăмахне каласа культараççĕ: «Çăмарта касаканпа ача турăм та ачи вара тăнлă пулчĕ». Вăрçа хыççăн ялта ветеринарсем пулманпа пĕрех. Ачалăхăм уйра крахмал пуçтарса, мăян çулçине яшкана ярса пĕçерсе, катан пиртен çĕленĕ кĕпе-йĕм тăхăнса, çăпата çĕтĕлсен куççуль юхтарса (урама выляма тухма май çуккипе) иртнĕ.

Хĕр çулне çитсен килтен тухса кайнă чух анне мана çаплăрах вĕрентсе каларĕ: «Хулана кайса çын хваттерĕсенче çапкаланса çӳриччен ялти фермăра укçа ту малтан. Хăвна кĕрсе тухмалăх шăтăк пултăр». Етĕрне районĕнчи пĕр ялта икĕ çул сысна ферминче амасене çăвăрлаттартăм. Укçа пухсан, Шупашкара килсе Трусиха юхан шывĕ хĕрринче засыпушка туянтăм. Кавча тухсан аннене факт умне çеç тăратрăм. Мăшăрăм та нушаллă çитĕннĕ. Шупашкарта пĕр çырма тĕпĕнче засыпушкăра амăшĕпе пĕрле çиччĕн пурăннă вĕсем. Пĕрлешсен man пата пурăнма куçрĕ. Пылчăк ăшĕнче мăй таран çăрăлтăмăр. Умлăн-хыçлăн ачасем çуралса пычĕç. Никампа хăварма çуккипе вĕсене пĕрле театра илсе каяттăмăр. Виççĕмĕшĕ çут тĕнчене килсен пурне те засыпушкăра питĕрсе хăварма пуçларăмăр. Отпуск вăхăтĕнче хĕлле валли вутă хатĕрлеттĕмĕр. Богданкăна – хула мунчине – çăвăнма çӳреттĕмĕр. Гастрольсене çемьепе тухса кайнă. Ирхине ачасем çывăрнă вăхăтра столовăйĕнчен хăна çуртне бидонпа яшка йăтаттăм... Хитре, тутлă, тулăх пурнăç мĕнне иксĕмĕр те пĕлмен. Çавăнпа та пурнăç йывăрлăхне ачаран курса ӳснипе эпĕ кулленхи пулăмсене йывăрлăх тесе шутламан. Халь пилĕк хутлă çуртра ырлăх курнă хыççăн çамрăклăх тарăн шухăша ярать. Кашни утăмăн хăйĕн пахалăхĕ, хакĕ. Пурăнан пурнăçра çын хурçă пек шăранать çав. Пулни-иртнине пĕр çĕре пухсан, хакласан – çакă вăл телей темелли юлать-ши?..

(Вĕçĕ çитес номерте).

Наши консультации

Разъяснение «дачной амнистии»

Вот уже три года на территории России действует Федеральный Закон от 30.06.2006 N 93-ФЗ «О внесении изменений в некоторые законодательные акты Российской Федерации по вопросу оформления в упрощенном порядке прав граждан на отдельные объекты недвижимого имущества», который широко известен под названием - Закон о дачной амнистии.

В Чувашской Республике за время действия «дачной амнистии» зарегистрировано более пятидесяти тысяч прав на недвижимое имущество. Основная доля из этого количества приходится на земельные участки. Только за пять с половиной месяцев 2009 года Регистрационной службой по упрощенному порядку было выдано свыше 17 тысяч свидетельств о праве.

В целом Закон о дачной амнистии был принят для того, чтобы максимально упростить и удешевить порядок оформления прав граждан на принадлежащие им фактически земельные участки и объекты недвижимого имущества. Он также значительно сокращает временные затраты граждан на посещение различных инстанций для сбора различных, часто излишних, справок, согласований, разрешений и документов.

Кроме того, Закон устранил непреодолимые препятствия, существовавшие в гражданском законодательстве. В частности раньше запрещалась регистрация прав на жилой дом без получения разрешения на его строительство, даже если дом был возведен несколько десятилетий назад.

Земельные участки

Упрощенный порядок государственной регистрации прав граждан на земельные участки установлен ст. 25.2 Федерального закона от 21.07.1997 N 122-ФЗ «О государственной регистрации прав на недвижимое имущество и сделок с ним» (далее - Закон о регистрации) и распространяется в отношении земельных участков предоставленных для ведения личного подсобного, дачного хозяйства, огородничества, садоводства, индивидуального гаражного или индивидуального жилищного строительства. А также предоставленных гражданам до введения в действие Земельного кодекса Российской Федерации, то есть до 30 октября 2001 г.

Пунктом 2 названной статьи установлен перечень документов, необходимых для государственной регистрации права на земельные участки в упрощенном порядке. Для того чтобы зарегистрировать право собственности на такой участок, в регистрационную службу необходимо представить следующие правоустанавливающие документы:

- акт о предоставлении такому гражданину данного земельного участка, изданный органом государственной власти или органом местного самоуправления в пределах его компетенции и в порядке, установленном законодательством, действовавшим в месте издания такого акта на момент его издания;

- акт (свидетельство) о праве такого гражданина на данный земельный участок, выданный уполномоченным органом государственной власти в порядке, установленном законодательством, действовавшим в месте издания такого акта на момент его издания;

- выдаваемая органом местного самоуправления выписка из похозяйственной книги о наличии у такого гражданина права на данный земельный участок (в случае если этот земельный участок предоставлен для ведения личного подсобного хозяйства);

- иной документ, устанавливающий или удостоверяющий право такого гражданина на данный земельный участок.

Обязательным приложением к представляемым в соответствии с указанной статьей документам является кадастровый паспорт соответствующего земельного участка.

Для государственной регистрации права собственности на такие земельные участки проводить межевые работы для подготовки кадастрового плана не обязательно.

При этом государственная регистрация права собственности гражданина на указанные земельные участки осуществляется также в случае, если:

- сведения о площади земельного участка, содержащиеся в представленном для государственной регистрации документе, не соответствуют данным кадастрового паспорта такого земельного участка;

- кадастровый паспорт такого земельного участка не содержит сведений о таком земельном участке в полном объеме, в том числе отсутствуют сведения о местоположении границ такого земельного участка, либо данные сведения нуждаются в уточнении.

Вышеуказанный порядок упрощенного оформления прав граждан на земельные участки не распространяется на земельные участки, предоставленные после вступления в силу Земельного кодекса Российской Федерации либо предоставленные для иных целей, чем указано выше.

Так же Закон о дачной амнистии внес изменения в ст. 28 Федерального закона от 15 апреля 1998 года N 66-ФЗ «О садоводческих, огороднических и дачных некоммерческих объединениях граждан». В соответствии с указанной статьей граждане, которым предоставлены садовые, огородные или дачные земельные участки на праве пожизненного наследуемого владения или постоянного (бессрочного) пользования, вправе зарегистрировать право собственности на такие земельные участки на основании заявления, и для этого не требуется принятия каких-либо решений органов власти (в том числе кооперативом или садоводческим товариществом) о предоставлении этих земельных участков в собственность.

Если земельные участки предоставлены на праве аренды или временного пользования, то предоставление их в собственность граждан осуществляется без проведения торгов по решению органов власти за плату или бесплатно в случаях, установленных законами субъектов Российской Федерации.

(Окончание в следующем номере).

Налук инспекцийĕнчен пĕлтереççĕ

Ĕç укçине йĕркеллĕ тӳлес пулать

Налук инспекцийĕн тĕп ĕçĕ-хĕлĕнчен пĕри вăл ĕçлекенсене ĕç укçи саккуна пăхăнмасăр, тепĕр майлă каласан, «конвертпа» тӳленине тĕрĕслесе тăрасси пулса тăрать. Кун пек чухне ĕç паракансем хăйсен ĕçченĕсене чи пĕчĕк ĕç укçи шайĕнчен сахалрах тӳлеççĕ. Организаци вара обязательнăй пенси страхованийĕн взносĕсене, уйрăм çынсен тупăшĕ çине хуракан налука, пĕрлехи социаллă налука тӳлессинчен пăрăнса юлать.

Ĕç укçине «конвертсенче» илекенсем халех ĕнтĕ вăхăтлăх ĕçлеймен кунсемшĕн пособисене, отпуск укçисене тулли виçепе е пачах та илме пултараймаççĕ. Хваттер илнĕ чухне, тӳлевлĕ йĕркепе вĕреннĕ чухне, кредит илнĕ чухне те налук тӳлевĕсене чакарассипе çăмăллăхсем пĕтеççĕ. Ĕç укçине кун пек мелпе тӳлекен организацисем хăйсен ĕçченĕсене малашне тивĕçлĕ пенси илессинчен пистереççĕ. Мĕншĕн тесен кун пек мелпе ĕç укçи тӳленинчен Пенси фондне укçа куçмасть.

Çапла майпа ĕç укçи тӳленине тупса палăртассипе инспекци тĕрлĕ енлĕ ĕçсем туса ирттерет: ĕç паракансене комисси ларăвĕсенче итлетпĕр, тĕрĕслев мероприятийĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсенче информаци кампанийĕсем ирттеретпĕр, семинарсем йĕркелетпĕр.

2008 çулта налук инспекцийĕ ку енĕпе комиссин 4 ларăвне ирттерчĕ, кăçалхи 1-мĕш кварталта вара – 3 лару. Вĕсенче ĕç укçине чи пĕчĕк шайран каярах тӳлекен 23 тата 22 организаци ертӳçине итленĕ.

Усси çук мар. 2008 çулта 8 организацире, кăçалхи 1-мĕш кварталта 14 организацире ĕç укçи шайне ӳстернĕ. Комисси ĕç-хĕлне пула бюджета тата бюджетпа çыхăнман фондсене татах 82,1 пин тенкĕ уйăрма май килнĕ. Ку ĕç малашне те пулса пырĕ.

Налук тӳлекен хисеплĕ ĕçченсем, енчен те эсир ĕç укçине йĕркене пăсса тӳленине пĕлетĕр пулсан, шанчăк телефонĕпе шăнкăравлама ыйтатпăр. Унăн номерĕ 8(83547) 2-30-64. Çырусене вара çак адреспа ярса памалла: Етĕрне хули, Çĕнтерӳ 30 çул тултарнин урамĕ, 2 «а» çурт.

Н. ОРЛОВА,
налук инспекцийĕн камеральнăй тĕрĕслевсен пайĕн пуçлăхĕ.

Çуллахи каникул кунĕсем

Канма та, ĕçлеме те пултараççĕ

Шкулсенче ĕçпе кану лагерĕсен пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленчĕ. Унта епле канни, вăхăта епле ирттерни пирки çыру авторĕсем каласа параççĕ.

Çуллахи каникулăн пĕр пайне Мăн Хураска шкулĕнчи 20 ача сывлăха çирĕплетмелли «Ачалăх тĕлĕкĕсем» лагерьте ирттернĕ. Ытларахăшне район центрĕнчи «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче пулни килĕшнĕ. Çавăн пекех ачасемшĕн асамлă сăрăсен кунĕ, музыка кунĕ, КВН, «Лагерь золушки» конкурс, вăрманта экскурсире пулса сиплĕ курăксем пухни, арçын ачасемшĕн футбол кунĕ асра юлнă. Кун пирки редакцие лагерь воспитателĕ **Р.В. Прокопьева** çырса пĕлтерчĕ.

Тепĕр çыру – Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчен. Унăн авторĕ – пуçламăш классене вĕрентекен **Г.И. Васильева**. Пуçламăш классенче вĕренекен 60 ача валли кунта «Туслăх» канупа сывлăх лагерĕ ĕçленĕ. Ачасен пурнăçĕ интереслĕ те пуян пултăр тесе лагерь ертӳçи Л.В. Храмова, аслă воспитатель Н.Ю. Якутова, Г.И. Васильева, С.В. Варюхина, А.А. Егорова, Г.М. Иванова воспитательсем, ташлама вĕрентекен Е.А. Жагерева сахал мар тăрăшнă. Ачасене тутлă апат-çимĕçпе А.П. Горшковапа З.В. Яшмолкина поварсем тивĕçтернĕ. Лагерьти смена вĕçленичченех ачасен сывлăхне пăхса тăрассипе Г.Г. Егорова педиатрпа Р.Н. Бычкова медсестра тимленĕ.

Шатракасси шкулĕнчи сывлăх лагерĕнчи «Тигры» отряд командирĕ **Марина Семенова** хăйĕн çырăвĕнче лагерьте куллен интереслĕ мероприятисем пулса иртни пирки пĕлтерет. Тĕрлĕрен вăйăсем, экскурсисем, ăмăртусем интереслĕ иртеççĕ. Икĕ отряд хушшинче юмах лартса парассипе те конкурс пуриншĕн те асра юлмалла иртнĕ.

В. ШАПОШНИКОВ.

Ыйту – хурав

Социаллă çăмăллăхсемпе усă курас тесен

– Эпĕ Чернобыльти атом электростанцийĕнчи инкеке пĕтерме хутшăннă. 2008 çулта 2009 çул валли социаллă услугăсемпе усă курасси пирки заявлени çырса панăччĕ. Çитес çул та çак социаллă услугăсемпе усă курас тетĕп. Манăн çакна валли тепĕр хут заявлени çырма тивет-ши?

А. НИКОЛАЕВ.

– 2008 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă 269 № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн федераллă çăмăллăхсемпе усă кураксен хăйсене социаллă услугăсемпе усă курассинчен хăтарма ыйтса заявлени çырассин йĕркине улшăнусем кĕртнĕ.

Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна тата Семипалатинскри ядерлă тĕрĕслевсене пула радиаци илнисене, вĕсемпе танлаштарнисене социаллă услугăсемпе тивĕçтересси унченхи пекех юлать. Апла пулсан сирĕн социаллă услугăсем илесси пирки кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен заявлени çырса парас пулать.